Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

43 (7897) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Икĕ Надежда – иккĕшĕ те маттур

***Çынсене социаллă пулăшусемпе тивĕçтерекен органсенче вăй хуракансен ĕçĕ çăмăл тесе калаймăн. Чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕхĕ те, çав вăхăтрах пĕлӳпе ăсталăх шайĕ те çителĕклĕ кирлĕ. Ачасемпе вĕсен амăшĕсене, тăлăхсемпе хӳтлĕхе тивĕç ытти çынсене пособисемпе компенсацисем йĕркеллĕ парса тăрасси, субсидисемпе тивĕçтересси, сывлăха çирĕплетме санаторипе курорт путевкисем уйăрса парасси, вăрçă тата ĕç ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсене, вилнĕ салтак мăшăрĕсемпе пĕччен ватăсене пурăнма кирлĕ условисем туса парасси пĕтĕмпех вĕсем çине тиенет. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракансем – ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Çынсене социаллă пулăшу паракан Муркашри центр» республика патшалăх учрежденийĕн тĕп бухгалтерĕ Н.Ю. Арапкина тата районти социаллă хӳтлĕх пайĕн тĕп бухгалтерĕ Н.Н. Васильева хăйсен тивĕçне ответлăха туйса пурнăçлаççĕ.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Июнĕн 8-мĕшĕ – Социаллă ĕçчен кунĕ

### СОЦИАЛЛĂ СФЕРĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ! ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп! Çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕç тăватăр эсир. Хăвăр пата эсир пулăшасса шанса килнĕ кашни çын ыйтăвне татса пама тăрăшатăр. Инвалидсен, ветерансен, нумай ачаллă çемьесен, пулăшу кирлĕ çынсен проблемисене хăвăр витĕр кăларса вĕсене татса парассишĕн тимлетĕр. Кашни çыннăн чунчĕри патне уйрăм çул-йĕр тупатăр: ваттипе ватă пек, çамрăкпа çамрăк пек калаçатăр. Вĕсемшĕн шанчăкпа тĕрек пулса тăратăр.

Мĕн чухлĕ чăтăмлăх, чун ăшши кирлĕ çынсен кăмăлне курма. Сирĕн вара çак ырă енсем пурин валли те çитеççĕ. Тавах сире хăвăрăн ĕçе юратнишĕн. Малашне те пĕрре те ан иксĕлтĕр сирĕн ырă кăмăл.

Хăвăрăн та сывлăхăр çирĕп пултăр. Ĕçлес туртăм, вăйхал тапса тăтăр. Телейлĕ вăрăм кун-çул сунатăп сире.

**Ю.А. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ, ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Çулсеренех çурхи ака-суха ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн районта Акатуй - ĕçпе юрă тата спорт уявне ирттеретпĕр. Кăçал вăл июнĕн 10-мĕшĕнче пулать. Пурне те сире çывхарса килекен Акатуй уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Кăçал та пулас тыр-пул никĕсне йĕркеллĕ хывса хăвартăмăр. Механизаторсем, специалистсемпе хуçалăхсен ертӳçисем, çĕр ĕçченĕсем тăрăшса вăй хучĕç. Пурне те сире çакăншăн тав тăватăп. Чăннипех те хисепе тивĕçлĕ эсир.

Халĕ умра тепĕр тĕллев – акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене йĕркеллĕ пăхса çитĕнтересси, выльăх апатне кирлĕ чухлĕ тата пысăк пахалăхпа хатĕрлесе хăварасси. Сирĕнтен кашниех хăйĕн тивĕçне малалла та тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласса шанас килет.

Хаклă çыннăмăрсем! Тавах сире район аталанăвĕшĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн. Уява тулли кăмăлпа ирттермелле пултăр. Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей сунатăп. Ăнăçу сирĕн пурнăç çулне уççах пытăр, çемйĕрсенче килĕшӳ пултăр.

**Ю.А. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

## Рубик кубикĕ е...

***Иртнĕ çул шăрăх кунсене пула выльăх апачĕ çителĕклĕ янтăлама май килменрен районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем питĕ йывăррăн хĕл каçрĕç. Çавăнпа та нумайăшĕ уйăха яхăн каяллах ĕнесене симĕс курăк çине кăларчĕ. Чуманкассисемпе Отарккăсем вара (чăнласах калатăп) хăйсем паян та хĕл ыйхинчен вăранса çитеймен! Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче ĕне кĕтĕвĕ паян та кĕтӳ ачи хăваланипе улăха тухаймасть. Килĕшӳллĕ-ши вĕсене çак сăмахсене район хаçатĕнче вуласа пĕлме? Иртнĕ тунти кун хуçалăхра район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕпе Т. Алексеевăпа пулса Чуманкассисен кубик-рубикне (Рубик кубикне ялта çапла калаççĕ) çавăркаласа пăхрăмăр. Йывăр иккен кунти пуç ватмăш! Вулăр та хăвăр пĕтĕмлетӳ тăвăр.***

### «УТĂ ПĔТСЕ, УЛĂМ ЮЛАШКИ ÇЕÇ...»

Районти çĕр ĕçченĕ çурхи ака-сухана вĕçлесе Акатуйсем ирттерет. Тăрăшуллă ĕçчен тивĕç çакна! Чапаев яч. хис. хуçалăхра та çурхи ака-сухара ыранхи куна шанса ĕçлерĕç. Кунта планпа пăхнинчен 6 процент ирттерсе (392 гектар) тырă-пулă акса хăварчĕç. Анчах çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленисен тăрăшулăхне кушак хӳри айне тăвакансем те тупăнчĕç ял хушшинче! Хуçалăх бухгалтерĕсем çĕр улми вăрлăхĕ суйланă вăхăтра ял «маттурĕсем» Отарккăри ĕне ферми çумĕнчи çурхи тулăн «Московская-35» супер-элита вăрлăхне акнă 15 гектара «хамăрăн» туса хучĕç. Çак шăпа эрне малах хăйсен тăванĕсем 20 гектар акнă урпан «Владимир» элита сортне те пырса тиврĕ. Хăшĕсем çак пусăна мотоблоксем кĕртме те именмерĕç... Çав вăхăтрах ку çĕрсен çĕнĕ хуçисен «çĕр ĕçĕсем» регистраци палати витĕр тухманни паллă. Çапла шутлатпăр-иха эпир тăван хуçалăх малалла каясси пирки? Çав вăхăтрах юнашар фермăри ĕнесем начарланса кайса ура çине тăрайми пулнă, вăкăрсем те начарланнипе ĕне патне пыраймаççĕ. Юрать-ха хуçалăхра ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерекен ĕçлет. Ахальлĕн... Пăрусене сарса пама улăм çукран вĕсем те питĕ мĕскĕннĕн пăхрĕç пирĕн çине.

– Утă пĕтсе, ĕнесемпе пăрусем, вăкăрсемпе тынасем валли унтан-кунтан улăм пуçтаратпăр. Рационра çăнăх пуррипе тытăнкаласа тăратпăр-ха. Çапах ыранхи кун епле пулассине пĕлместпĕр. Ял çыннисем хушшинче кĕтӳ пăхма килекен çук. Хуçалăх ертӳçи те чĕнет, хамăр та калаçатпăр, анчах лавĕ çавçавах вырăнтан тапранмасть, – терĕç ĕне сăвакансем.

**(Вĕçĕ 3 стр.).**

Патшалăх пулăшăвĕ

## Ветерансем хваттерлĕ пулчĕç

Чăваш Республикин Президенчĕн 2008 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи 714 № Указĕпе килĕшӳллĕн Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пăхса хунă.

Федераллă бюджетран уйăрнă укçа-тенкĕпе районти 212 ветеранпа тăлăх арăм пурăнмалли условисене лайăхлатма черете тăнă пулнă. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсенчен 156-шĕ патшалăх пулăшăвĕпе усă курса условисене лайăхлатнă.

Указа пурнăçласси малалла пырать. Аса илтеретпĕр, ветерансене уйăрса паракан укçа 910,8 пин тенкĕпе танлашать.

**Хамăр инф.**

Райадминистрацире

## Нумай çул ĕçленĕшĕн

Çитĕнекен ăрава вĕрентсе воспитани парассинче çитĕнӳсем тунăшăн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи майăн 13-мĕшĕнчи 415 № йышăнăвĕпе «Ильинкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн директорне **Вера Федоровна ИЛЬИНАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

## Çĕмпĕр çĕрĕ чăвашсене йышăнчĕ

Акатуй

***Июнĕн 4-мĕшĕнче Ульяновскра Чăвашсен пĕтĕм Раççейри Акатуй наци уявĕ иртрĕ. Çĕмпĕр çĕрĕ чăвашсемшĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Раççейăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан пиншер чăваш хутшăнчĕ унта.***

***Вĕсен шутĕнче – пирĕн район представителĕсем те. Çавна май асăннă уяв пирки тĕплĕнрех унта хутшăннă делегаци представительне район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхне Алевтина Евстафьевна АНДРЕЕВĂНА каласа пама ыйтрăм.***

– Пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн чăннипех те пысăк уяв пулса иртрĕ çак кунсенче Çĕмпĕр çĕрĕ çинче. Унта пулса курни нумайлăха асра юлĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пынипе пирĕн район делегацийĕ те хутшăнчĕ унта. Пултарулăх ушкăнĕсенчен Орининти «Шуракăш» юрăпа ташă халăх ансамблĕ тата Ярапайкассинчи «Екрем» халăх фольклор ушкăнĕ хăйсен пултарулăхĕпе Акатуй уявне пухăннисене савăнтарчĕç.

Çавна палăртмалла. Ульяновскра Чăваш Республикин культурин кунĕсем июнĕн 1-мĕшĕнчех пуçланнă. Хула çыннисен чăваш професси искусствин шедеврĕсемпе паллашма майсем пулнă. Культура программин кульминацийĕ вара вăл тĕп площадьри театрализациленĕ представлени пулса тăчĕ.

Ырă йăлапа пысăк хăнасене – республика Президентне Михаил Игнатьева, Ульяновск облаçĕн кĕпĕрнаттăрне Сергей Морозова тата РФ Патшалăх Думин халăхсем хушшинчи ĕçĕсен комитечĕн председательне Константин Косачева çăкăртăварпа, чăваш сăрипе кĕтсе илчĕç, чăваш шупăрĕсене тăхăнтартрĕç.

Уявăн вăйă карти хăйĕн анлăшĕпе пурне те тĕлĕнтерчĕ. Эстони, Пушкăрт, Оренбург, Тюмень, Самара, Саратов чăвашĕсен сассисем пĕрле хăватлăн янăрарĕç. Çакăнта пулса курнă хыççăн чăннипех те чăваш çĕрĕ çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă тата çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ тесе калас килет.

Тĕп сцена çинчи илĕртӳлĕх пурне те тытăнларĕ пулĕ. Витререн тăкнă пек çумăр лӳшкеме тытăнни те артистсене хăйсен пултарулăхне туллин уçса пама чăрмантараймарĕ. Куракансем вара пĕрле юрларĕç, алă çупрĕç, савăнчĕç. Акатуйри çумăр вара тыр-пулăн пысăк тухăçне шантарать.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**каласнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Муркашсем уявра.**

Саламлатпăр

Юратнă мăшăрăма, аннене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Капитолина Петровна ОХОТНИКОВĂНА** 65 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Ытарайми аннемĕр, сана чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Тайма пуç сана, аннемĕр. Эсĕ пурри – нимĕнпе виçеймĕ пуянлăх, савăнăç, телей. Пурăнас кун-çулу вăрăм пултăр санăн, чун юратнă аннемĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, тăватă ывăлĕ, кинĕсем, икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, тăхăр мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, тăванĕсем.**

# Ĕçĕ кăткăс, ответлăхĕ пысăк

**Июнĕн 8-мĕшĕ – Социаллă ĕçчен кунĕ**

***Районта паян социаллă хўтлĕх ĕçне-хĕлне Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин икĕ органĕ – районти социаллă хўтлĕх пайĕ тата «Çынсене социаллă пулăшу паракан Муркашри центр» республика патшалăх учрежденийĕ пурнăçлаççĕ. Хăйсем туса ирттерекен ĕççем пирки районти социаллă хўтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Нина Пантелеевна ПЕТРОВА каласа пама кăмăл турĕ.***

– Социаллă хўтлĕхе тивĕçлисем – çынсен уйрăм категорийĕ. Вĕсене компенсацисемпе, пособисемпе, субсидисемпе вăхăтра тата йĕркеллĕ тивĕçтерсе тăни епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни каламасăрах паллă. Хăйсем çинче мĕнле ответлăх пулнине пирĕн патра вăй хуракансенчен кашниех лайăх ăнланать.

Ачаллă çемьесене пулăшасси патшалăх политикин тĕп енĕсенчен пĕри пулса тăрать. Акă çак вăхăта пособи илсе тăракан ачасем 4261 шутланаççĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсен ашшĕ-амăшне 8454,3 пин тенкĕ тўленĕ.

Пур ачан та тулли çемьере, ашшĕ-амăшĕн хўттинче ўсме май килмест. 47 ача шăпи хальхи вăхăтра опекунсемпе попечительсен аллинче. Вĕсем те патшалăх пулăшăвĕсĕр юлмаççĕ. Кун пеккисене республика бюджетĕнчен 1561,3 пин тенкĕ уйăрса парса пулăшнă.

17 ашшĕ-амăшĕ 26 ача на хăйсен çемйине пăхса пурăнма йышăннă. Вĕсем те хўтлĕх пайĕ урлă пособи илсе тăраççĕ. Çак тĕллевпе ун пеккисене 615,65 пин тенкĕ уйăрса панă. Вĕсене ачасем пăхса пурăннăшăн ĕç укçи шучĕпе пĕтĕмпе 275,83 пин тенкĕ тўленĕ.

Ĕçре шутланман хĕрарăмсене çие юлнăшăн тата çуратнăшăн республика бюджетĕнчен пособи тўлеме 37,44 пин тенкĕ уйăрнă. Ăна илекенсем кăçалхи 5 уйăхра 44 хĕрарăм пулчĕ.

Ĕçлемен хĕрарăмсене ача çулталăк çурăна çитиччен пособи тўлеме укçа уйăрассине федераллă бюджетра пăхса хунă. Çав тĕллевпе 372 ачашăн 4969,46 пин тенкĕ уйăрса панă ĕнтĕ. Ача çуралсан пĕр хут паракан пособи шучĕпе 59 ачашăн 673,34 пин тенкĕ уйăрнă.

Ĕççĕррисене пытарма каякан тăкаксене саплашталасси те пирĕн урлах пулса пырать. Çулталăк пуçланнăранпа 43 çынна пытарма 179,3 пин тенкĕ уйăрса патăмăр.

Хваттерте пурăннăшăн тата коммуналлă услугăсемпе тивĕçтернĕшĕн тўлеме субсиди илсе тăракансем те сахал мар. Кун пеккисем пĕтĕмпе 466 çын. Вĕсене иртнĕ 5 уйăхра пĕтĕмпе çак тĕллевпе 1381,4 пин тенкĕ парса пулăшнă.

Социаллă хўтлĕхе тивĕçлĕ çемьесенчи ачасене сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене ярассине манăça кăлармастпăр. 2011 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне кун пек лагерьсенче 12 ача хăйĕн сывлăхне çирĕплетрĕ. Халĕ татах 12 ача социаллă хўтлĕх пайĕ урлă тĕрлĕ лагерьсенче каннипе пĕрлех сывлăхне те çирĕплетет.

«Çынсене социаллă пулăшу паракан Муркашри центр» республика патшалăх учрежденийĕнче 9992 пенсионер учетра тăрать. Вăл шутран Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем 110, вăрçăра вилнĕ салтак мăшăрĕсем 391, тыл ĕçченĕсем 1287, ĕç ветеранĕсем 4501, Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсем 38. Çак категорисенчи çынсене районти социаллă хўтлĕх пайĕ урлă кăçал 34311,31 пин тенкĕлĕх çăмăллăхсемпе тивĕçтернĕ.

Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе пĕччен пурăнакан 529 ватă çынна учета илнĕ. Вĕсенчен 108-шне социаллă ĕçченсем килĕсенче пăхса тăраççĕ.

Çак тапхăрта пирĕн пата тĕрлĕ енлĕ социаллă пулăшу ыйтса 823 ватă çынпа инвалид пычĕ. Вĕсенчен 9-шне килĕсенче пăхса тăрассине йĕркеленĕ. 6 çынна интернат çурчĕсемпе ватă çынсен вăхăтлăх пурăнмалли çурчĕсене вырнаçтартăмăр. 808 çынна тĕрлĕ ыйтупа консультаци пулăшăвĕ панă.

Хамăрăн тўрремĕн пурнăçламалли ĕççемсĕр пуçне тĕрлĕ мероприятисем те сахал мар ирттеретпĕр. Кусем вĕсем ветерансемпе инвалидсене, ватă çынсене юбилейсемпе тата çуралнă кунĕсемпе чысланисем те, календарьти тĕрлĕ датăсемпе ирттерекен мероприятисем те, конкурссемпе фестивальсем те, спорт ăмăртăвĕсем те, çавра сĕтелсем те, ыр кăмăллăх марафонĕсем те. Эпир ăнланатпăр: инвалид-и вăл, ватă çын-и е ача – никам та тимлĕхсĕр, хўтлĕхсĕр, пулăшусăр юлмалла мар.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**каласнă.**

***«Ватă çынсемпе инвалидсен Йўçкассинчи интернат çурчĕ» республика патшалăх учрежденине 7 çул каялла июнĕн 5-мĕшĕнче уçнă. 33 ватă çынпа инвалид хўтлĕх тупнă унта. Хăйсен ватлăх кунĕсене йĕркеллĕ ирттерме кунта пур услови те туса пама тăрăшаççĕ.***

***Эсир сăн ўкерчĕкре куракан Альбина Валериановна Цветкова çакăнта медицина сестри пулса вăй хурать. Хăйĕн тивĕçне ответлăха туйса пурнăçлать. Çавăнпа та вăл коллективра та хисепре, кунта пурăнакансем те ун пирки ырăпа кăна асăнаççĕ.***

***В. ШАПОШНИКОВ***
***сăн ўкерчĕкĕ.***

# Кун пирки вĕçĕм аса илтермелле

**Хаçатра çырни патне таврăнса**

Район хаçачĕн майăн 18-мĕшĕнчи номерĕнче В. Шапошников район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕнчен В.Г. Никитинран илнĕ «Тасалăх пирки пĕрле тимлер» интервью пичетленсе тухнăччĕ. Сăмахсăрах паллă, питĕ кирлĕ те вырăнлă статья.

Çавна май мана пĕр самант аса килет. Пĕррехинче эпĕ В. Шапошников патне çўп-çап пуçтарасси пирки статья илсе пырсан вăл мана: «Эпир ун пирки çырнăччĕ ĕнтĕ»,– тесе каларĕ. «Ун пирки пĕр хут мар, кашни номерте çырас пулать»,– тесе хуравларăм эпĕ ăна. Юлашки вăхăтра район хаçачĕ тирпей-илем, тасалăх ыйтăвĕсене пысăк вырăн уйăрнине мухтамалла кăна.

Хаçатри статьяна эпĕ тепĕр хут та тĕплĕ вуласа тухрăм. Проблемăсене пур енлĕн тата пурне те татса панăн туйăнмасть. Тĕп ыйту – пластик кĕленчесене, унран хатĕрленĕ ытти хатĕрхĕтĕре ăçта кайса чикессин проблеми халĕ те «сывлăшра çакăнса тăрать». Тĕслĕх илсе кăтартам. Манăн улăхçаран çинче темиçе хут та ял çыннисен выльăхĕсене кĕтсе çўреме тиврĕ. Мĕн куратăп-ха эпĕ? Ăçта килчĕ унта пластик кĕленче йăваланса выртать. Кĕтў кĕтекенсем усă курнă кĕленчесене унтах пăраха-пăраха хăвараççĕ.

Тем пулсан та кун пек тума юрамасть. Шутласа пăхма арифметик пулни кирлĕ мар. Кун пекех пулсан эпир часах улăх-çарансене те тасамарлăхпа вараласа пĕтерĕпĕр. Çакă вара мĕн патне илсе пырасси те паллă. Пластик савăт таврашĕ çĕрĕшмест. Çĕрĕшсен те унăн юлашкисем сиенлĕ. Вĕсем тăпрана, ўсен-тăрана, выльăхсене, çынна та сиен кўреççĕ.

Çавăнпа та пирĕнтен кашнин питĕ асăрхануллă пулмалла. Çўп-çап ыйтăвне татса парассипе ĕçлемелле те ĕçлемелле.

Çўп-çап турттарнăшăн тўлесси пирки çавна каласшăн. Пирĕн шутпа кунта нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансемпе ял çыннисене уйрăмăн шута илес пулать.

**В. МАСТЕРОВ,**
**вăрçăпа ĕç ветеранĕ.**

**Муркашри куç курманнисен пурнăçĕнчен**

# Туслă пурăнатпăр

Вăхăт шав малаллах шăвать. Çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче Шупашкар хулине Чăваш Республикинчи куç курманнисен обществине кĕрекен 12 вырăнти организаци 36 делегачĕ, чаплă та хаклă хăнасем пухăнчĕç. Унта отчетпа суйлав конференцийĕ иртрĕ.

Самани халĕ никамшăн та çăмăл мар, куç курманнисемшĕн вара пушшех те. Муркашри куç курманнисен обществи пĕчĕкех мар, 218 çын пĕрлешўре.

Çулсеренех куç курманнисен шучĕ, шел пулин те, ўссех пырать. Республикипе вĕсем 4000 çынран та ытларах, анчах та 2300 çын кăна куç курманнисен обществине кĕнĕ. Иртнĕ 5 çул хушшинче тĕрлĕ сăлтавсене пула республикăра 1289 çын суккăрланнă, вĕсенчен 854-шĕ çеç пирĕн ВОС обществине кĕнĕ. Çакă вара пире пăшăрхантарать, мĕншĕн тесен сусăр çынна яланах пулăшу кирлĕ.

Суккăрланнă çынна чирĕн малтанхи тапхăрĕнче реабилитаци центрне (вăл Волоколамск хулинче вырнаçнă) сипленме яма май пур.

Енчен те сусăрланнă çын 55 – 60 çултан çамрăкрах пулсан ăна 12 тĕрлĕ хушма професси илме вĕренме яма май пур (килти хушма хуçалăхра вĕлле хурчĕсене, кайăк-кĕшĕке е ытти килти выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетесси, автомашинăсене юсасси, алсиш-чăлха çыхма тата атă-пушмак юсама вĕренесси). Унсăр пуçне тĕрлĕ алă ĕçĕсене вĕренме пулать. Çав хушăрах пилĕк уйăх хушши ăста врач-реабилитологсем, психологсем сусăр çынсене йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пуçа усмасăр пурăнма вĕрентеççĕ.

Эпир сусăрсемпе яланах ăшшăн калаçатпăр, вĕсене яланах пулăшма хатĕр.

Куç курманнисен обществи район администрацийĕн çуртĕнче 3-мĕш хутра 333-мĕш пўлĕмре вырнаçнă. Пирĕн Муркашăн вырăнти организацийĕ Элĕкпе Муркаш районĕсене пĕрлештерсе тăрать. Уйăхра пĕрер хут тĕл пулса чун-чĕрене уçса калаçатпăр, хуйхасуйха пĕрле пайлатпăр.

Çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче эпир Çемье кунне анлăн паллă турăмăр. Çĕртме уйăхĕнче пĕрле тĕл пулма калаçса татăлтăмăр. Ун чухне çут çанталăкпа таччăнрах киленĕпĕр, эмел курăкĕсем пухма вĕренĕпĕр. Час-часах тĕл пулаймастпăр та пĕр-пĕринипе курса калаçни паха.

Иртнĕ çулхи ĕç кăтартăвĕсене эпир татах та çўлти шая çитерме пултартăмăр. 2010 çулта республикăри ытти куç курманнисен обществисем хушшинче Муркашпа Элĕк районĕсене пĕрлештерсе тăракан вырăнти организаци республикăра 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ. Кунта район администрацийĕн тўпи те, сывлăха сыхлас енĕпе тата социаллă хўтлĕх енĕпе ĕçлекенсен, пенси фондĕнче тăрăшакансен, культурăпа вулав центрĕнче ĕçлекенсен тўпи те пысăк. Ĕçри кăтартусем вара пире татах та лайăхрах ĕçлеме, ырă ĕççем татах та ытларах тума хистеççĕ.

Эпир, куç курман сусăр çынсем, пурне те чунчĕререн тав тăватпăр, пирĕн нушана ăнланакансене Турри пур çĕрте те упраса пытăр, хуйхăсуйхă сирĕнтен аякран пăрăнса кайтăр. Сывлăхăр çирĕп, кăмăлăрсем яланах çурхи хĕвел пек ăшă пулччăр, çемйĕрсенче телейпе килĕшў хуçалантăр.

**А. МИХАЙЛОВА,**
**куç курманнисен**
**Муркашри вырăнти**
**организацийĕн ертўçи.**

# Культурăна аталантарассишĕн пĕрле вăй хунă

**Истори страницисем**

1980-мĕш çулсенче культура ĕçĕ-хĕлĕ уйрăмах анлă аталанать. Ун чухне пĕтĕм ĕç-хĕле СССР Апатçимĕç программине пурнăçлассипе явăçтарнă. Правительство, парти тата комсомол ял çыннисен канăвĕн пурлăхпа техника базине çирĕплетесси, культура учрежденийĕсен кадрĕсене хатĕрлесси, çамрăксемпе ĕçлессипе çĕнĕ формăсемпе усă курасси çине пысăк тимлĕх уйăрнă.

Ял çыннисен канăвĕн пурлăх бази тĕпрен улшăннă. 10 çул хушшинче библиотекăсене кĕнекесемпе комплектласси хула шайĕпе танлашнă. Хуçалăхсен укçи-тенкипе Ваçкассинчи, Шурчари, Турайри, Тренккăри, Юнкăри, Матьăкри Культура çурчĕсене çĕклеме май килнĕ. Вĕсемпе пĕрлех библиотекăсем, кинобудкăсем, хальхи йăла тата курав залĕсем те уçăлнă. Ку енĕпе хуçалăхсен ертўçисем А.М. Михайлов, Б.В. Андреев, В.В. Храмов, П.П. Давыдов сахал мар тăрăшнă. 1984 çулта районта культурăпа спорт комплексне туса хунă. Тĕрлĕ мероприятисем ирттересси вăя кĕнĕ. Районта культура ĕçченĕсене хуçалăхсем шучĕпе должность оклачĕ çумне 30 процент хушса тўлесси те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă.

1985 çул тĕлне районта 2 автоклуб тата 1 библиобус, культура пайĕ çумĕнчи 2 агитбригада, ялсенчи Культура çурчĕсенчи 7 агитбригада ĕçленĕ. 1990 çул вĕçленнĕ тĕле вара ялсенчи тĕп Культура çурчĕсем çумĕнчи агитбригадăсен ĕçне йĕркеленĕ пулнă.

Шкул музейĕсене экспонатсемпе пуянлатнă. Халăхăн çар тата ĕç традицийĕсене пропагандăлас тĕлĕшпе те культура учрежденийĕсем пысăк вырăн йышăннă.

Художество пултарулăхне аталантарассишĕн пур ертўçĕсем те тăрăшнă. Вĕсенчен чылайăшĕ çак ĕçе хăйсем те хутшăннă. Кунта ун чухнехи комсомол райкомĕн ĕçченĕсене Ю.А. Иванова, Л. Хораськинăна, райĕçтăвком ĕçченĕсене Н.П. Петровăна, М.П. Рубцовăна, А.П. Скворцова, врачсенчен В.Г. Данилова, В.М. Самушкова, В.М. Басяева, учительсенчен Е.П. Расторгуевăна, А.Е. Андреевăна, В.И. Ярикова, В.С. Игнатьевăна, Э.В. Петровăна, предприяти ертўçисенчен В.И. Вязова, А.И. Егорова, М.Е. Петрова тата ыттисене те палăртса хăвармалла.

Районти Культура çуртĕнче çуллен кружоксемпе тĕрлĕ пĕрлешўсем 15-рен кая мар ĕçленĕ. Уйрăмах «Шурăмпуç» юрăпа ташă халăх ансамблĕ, районти культура ĕçченĕсен хорĕ палăрнă. Район историйĕнче пĕрремĕш хут 1981 çулта районти Культура çуртĕнче Р. Софронова ертсе пынипе балл ташшисен ача-пăча ансамблĕ ĕçлеме пуçаннă. 1983 çулта ăна халăх коллективĕн ятне панă.

Ярославкăри Ю. Усов ертсе пыракан ачасен хорĕ 1989 çулта халăх коллективĕн ятне тивĕçнĕ. Культура учрежденийĕсем пĕрпĕрин хушшинче ăмăртнă, халăх коллективĕсенчен пĕртте кая пулман. Кунта Турай, Юнкă, Оринин хорĕсене, Мăн Сĕнтĕрти, Москакассинчи, Ярославкăри, Ярапайкассинчи хорпа ташă коллективĕсене палăртмалла. Кашни хор коллективĕнчех 30 участникран кая мар, ташă ушкăнĕсем 5-рен кая мар пулнă. Хыççăнхи çулсенче вокалпа инструментсен ансамблĕсем йĕркеленме тытăннă.

Культура учрежденийĕсен пахалăхлă ĕçне-хĕлне çакă та çирĕплетет. Районти Культура çурчĕ, Юнкăри, Ярапайкассинчи, Ярославкăри Культура çурчĕсем, тĕп библиотека системин Москакассинчи, Чуманкассинчи, Шетмĕпуçĕнчи филиалĕсем 5 çул хушши е ытларах та «Пысăк пахалăхлă ĕç клубĕ (Культура çурчĕ)», «Пысăк пахалăхлă ĕç библиотеки» ятсене тытса тăнă.

Ĕç çыннисен ăс-хакăл культурин шайне ўстерес тĕллевпе 1990 çулта халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Союзри 3-мĕш фестивальне ирттернĕ. Унта Оринин хорĕ, Мăн Сĕнтĕрти художество пултарулăх коллективĕ, Ориненти ташă коллективĕ, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхăн халăх инструменчĕсен оркестрĕ, Тойкилтĕри Культура çуртĕнчи купăсçăсен ансамблĕ лауреатсем пулса тăнă.

Пахалăхлă та тухăçлă ĕçшĕн культура ĕçченĕсем Ф.Ф. Григорьева, А.Ф. Николаев тата Т.В. Иванова СССР Культура министерствин, Г.Г. Голубева, В.П. Илларионов, А.И. Захарова, Л.В. Кроликова, В.М. Александров, Л.Н. Вишнева, Н.С. Романова, Г.С. Фадеева ЧАССР Культура министерствин паллисене тивĕçнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ паян та районти культура сферинче вăй хурать.

**Р. СЕДАТЛОВА.**

# Рубик кубикĕ е...

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче**

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).

**НИВУШЛĔ ĔÇЛЕЙМЕСТПĔР?**

Çакăн пек ыйтупа тухас килет манăн паян Чуманкассисемпе Отарккăсем умне. Ку ыйтăва хускатма сăлтавĕ те пур. Чапаев яч. хис. хуçалăх ертӳçи И. Захаров каласа панинчен акнă уйсенче пай çĕрĕсем илме тухакансем хушшинче фермăна кĕтӳ пăхма пырас кăмăллисем çукмĕн. Юлашки вăхăтра доярăсемпе пăру пăхакансем кĕскетнĕ кун йĕркипе курăк çине илсе тухнă ĕнесенчен иккĕшне начаррине пула аша ăсатма тивнĕ.

– Çумăр çăвать пулсан та паян та кăлартăмăр-ха, анчах çур кунлăха кăна. Пирĕн те киле кайса ĕçлемелле. Ыран манăн тата касу пăхма каймалла, – терĕ ферма ĕçченĕсемпе ирттернĕ калаçура пĕр доярка.

Регина Иосифовна Смирнова (фермăри ĕç стажĕ 15 çул), Людмила Григорьевна Борисова (5 уйăх), Раиса Федоровна Яковлева (30 çул ытла) ĕне сăвакан операторсемпе пăрусемпе тынасем тата «самăртма» хупнă вăкăрсене пăхакан Валентина Аверьевна Волкова (4 çул) ĕçне тишкерсен вĕсене паттăрсем темесĕр (чăнах) чун чăтмасть. Р. Яковлева акă, тĕслĕхрен, пенсире пулсан та хуçалăхри ĕçсене пăрахса киле кайса лараймасть. «Юрать вăл тухрĕ-ха», – теççĕ ĕçтешĕсем ун пирки.

– Пĕлтĕр те кĕтӳçсемпе ывăнса çитсе. Вĕсем ĕçе тухман чухне хамăр миçе хутчен кĕтӳ кĕтме каймарăмăр пулĕ! Кăçал каллех çав истори. Тĕрĕсрех каласан йывăртарах та. Кĕтӳ пăхма кунне 2,5 пин тенкĕ ыйтни ытлашши ĕнтĕ. Тӳлемеççĕ тенине çапла хурав парас килет. Ĕç укçине памасăр тăман, – терĕ кăçал машинăпа ĕне сăвакан операторсен районти конкурсне хутшăнса ямăр мар ăмăртнă Регина Смирнова.

**ĔÇ КИЛĔШĔВĔ**

Ман умра хуçалăх ертӳçи И. Захаров, кĕтӳçсен бригадирĕ Ю. Аверкиев, З. Ивановăпа Н. Филиппов кĕтӳçсем алă пусса çирĕплетнĕ иртнĕ çулхи ĕç килĕшĕвĕ выртать. Унта 140 ĕнепе тынана ĕç дисциплинине пăсмасăр, кĕтӳ йышне чакармасăр, яваплăха туйса пăхсан пĕр центнер сĕтшĕн 50 тенкĕ, пĕр пуç тына пăхма 40 тенкĕ тӳлемелле тесе çырнă. Кунсăр пуçне преми тата пĕрер тонна утăпа улăм, 1,5 тонна тырă тӳлевсĕр пама йышăннă.

– Утă сахал пулнăран ăна парса çитереймерĕмĕр паллах, анчах ăна кăçал саплаштарас тетпĕр. Çак çу кунĕсенче кĕтӳ пăхакансене те çав условисенех сĕнетпĕр. Ун çумне хушса тӳлессине те пăхатпăр. Урăх мĕн тăвас? – ыйтуллăн тинкерчĕ Игорь Юрьевич. Эпĕ хурав параймарăм. Ун вырăнне Отарккăри ĕне ферминче ĕçлекенсен сăмахне илсе парас тетĕп.

– Ĕçлекен çынна тӳлемеççĕ тейместпĕр. Пире пĕлтĕр ĕç укçисĕр пуçне тырă ĕç кунĕпе тата ĕç килĕшĕвĕпе пĕршер тонна тӳлевсĕр парса. Шăрăх пулнă çу кунĕсене кура çителĕклех мар пулсан та утă-улăмсăр та юлман эпир. Тивĕçтерет пире ку услови, – терĕç вĕсем лару-тăру ырă енне улшăнасса, ял çыннисем хуçалăхăн йывăрлăхĕсене ăнланса илессе шанса.

**5 УЙĂХРИ ĔÇ КĂТАРТĂВĔ**

Кăрлач – çу уйăхĕсенче Чапаев яч. хис. хуçалăхра пурĕ 18,7 (пĕлтĕр 3,7) тонна аш-какай туса илнĕ. Лайăх темелле, анчах кунти «ӳсĕм» выльăхсен йышĕ чакнипе çыхăннине пытарма çук. Хуçалăх сысна фермине тĕппипех хупнă. Майракаллă шултра выльăхсен кĕтĕвĕ те пĕлтĕрхинчен 16 пуç сахалланнă. Çак тапхăрта 99,4 тонна сĕт сунă (пĕлтĕр – 105,9 т). Иртнĕ çулхи 5 уйăхра хуçалăх пĕр ĕне пуçне 1933 кг сĕт сунăтăк, кăçалхи кăтарту – 1744 кг. Пĕтĕмĕшле лару-тăрура пăрусем илесси те 56-ран икĕ хута яхăн чакнă.

**МАЛАШЛĂХ**

Хуçалăхри ĕç-хĕлпе паллашнă май Чуманкассисем малалла (!) пăхни те курăнчĕ. Пĕлтĕр вĕсем инвестици кредичĕпе (8 çулта тӳлесе татмалла) ХТЗ-150К-09 çĕнĕ трактор, универсаллă диск агрегачĕ, пĕрре кайсах тырă акма çĕр хатĕрлекен Австрире туса кăларнă культиватор туяннă. Пурĕ 2 миллион та 689 пин тенкĕлĕх. Кăçал та çур акире ăнăçлă ĕçлеме 1 миллион та 200 пин тенкĕ кĕске вăхăтлăх кредит илнĕ. Халĕ тепĕр миллион та 30 пин тенкĕлĕх инвестици кредичĕпе çĕнĕ МТЗ-82 трактор тата рулонлă пресс-подборщик туянма килĕшӳ тунă. Çур акире козлятникăн супер-элита вăрлăхне пĕр тонна, çурхи тулăн «Московская-35» супер-элита вăрлăхне 4,5 тонна, кукурузăн паха вăрлăхне 1,2 тонна туянса акса хăварнă. Вăл пусăсен пĕр пайĕнче паян шалчасем ларни вара кирек кама та шухăшлаттарма кирлĕ. Çапла мар-и?..

– Малашлăха пăхни лайăх-ха, анчах ĕне кĕтĕвне ешĕл курăк çине кăларса продукци илессине çĕклемесен те ыранхи кун пирки шутлама кансĕр. Нумай хуçалăх кредитсене выльăх-чĕрлĕх отраслĕ урлă саплаштарса пырать. Чапаев яч. хис. хуçалăхăн выльăх-чĕрлĕх отраслĕ те тухма çук лакăма анса ларсан кредитсене тӳлесси те ыйтуллă пулса тухать. Çакна шута илсе хуçалăх ертӳçин ял çыннисемпе пĕр чĕлхе тупма майсем шырамаллах. Ял çыннисем те хуçалăх ĕçĕ çине тӳнтерле пăхма чарăнасса шанас килет, – терĕ И. Захаровпа ирттернĕ тĕл пулура район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Т. Алексеева.

**ВĔÇĔ**

Вăт çакнашкал ўкерчĕк. Рубик кубикĕн тĕссене пĕрешкел кăларма йывăрри Чуманкассисемпе Отарккăсемшĕн çеç мар, маншăн та яр уççăн куç умне тухрĕ. Эсир мĕнле шутлатăр?

**А. БЕЛОВ.**

**Патриотизм**

# Çĕнтерӳ çулĕпе тунă çитĕнӳ



Интернационалла çар тивĕçне пурнăçланисем – паянхи çамрăксемшĕн хăйне евĕр паттăрлăх тĕслĕхĕ. Ĕнерхи афганецсем паян та хăйсем пирки ыррине çеç калаçтараççĕ. Вĕсем туса ирттерекен ĕçсем çамрăксене Тăван çĕр-шыва, хамăр халăха, сывă пурнăç йĕркине ытларах юратма вĕрентеççĕ.

Çу уйăхĕн вĕçĕнче Кӳкеç поселокĕнчи «Улăп» спортпа сывлăх центрĕнче Афганистан вăрçин инваличĕсемпе вĕсен çемье членĕсен «ВоИн-спорт-2011» спартакиади иртрĕ. Кăçалхи ăмăртусене спартакиада йĕркелӳçисем Совет Çарĕсене Афганистан Республикинчен илсе тухнăранпа 22 çул тата Аслă Çĕнтерӳ 66 çул тултарнине халаллаллă.

Иккĕмĕш çул ирттерекен çак спартакиадăран Муркашсем те пăрăнса юлмарĕç. Пĕтĕмлетсе каласан 12 команда хушшинче пирĕннисем начар ăмăртмарĕç. Муркашри афганецсем волейболла выляса 2-мĕш вырăн, каната туртассипе 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕç. Кире пуканĕ çĕклессипе К. Петров 5-мĕш вырăн йышăнни те пĕрлештернĕ командăшăн пысăк тĕкĕ пулчĕ. Пирĕннисем шывра ишессипе те ыттисенчен кая юлмарĕç.

Тунă ўсĕмсемшĕн хамăр интернационалист салтаксене саламлатпăр!

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ўкерчĕкре канат туртассипе çĕнтернисене куратăр (сулахайран сылтăмалла): К. Петров, И. Васильев, А. Паргеев, В. Грачев, В. Киршев, С. Андреев.**

**Кĕскен**

## Çĕннипе паллашма – кӳршĕ республикăна

Июнĕн 4-мĕшĕнче Муркаш районĕн делегацийĕ Тутар Республикинчи «Уй-хир кунне» хутшăннă. Делегаци шутĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.А. Калинин, «Свобода», Е. Андреев яч. хис., «Восток» хуçалăхсен ертӳçисем В.К. Ананьев, В.И. Семенов, М.Н. Шишокин, «Ударник» хуçалăхăн тĕп инженерĕ В.И. Степанов пулнă.

Ку мероприятие йĕркелекенĕ – акционерсен «Проминтел-Агро» хупă обществин компанийĕ. Вăл ял хуçалăх техники туса кăларассипе паллă вырăн йышăнать. Ытларах кунта çĕр хатĕрлемелли, выльăх апачĕ пухса кĕртмелли техникăна кăтартнă.

## Пилĕк уйăхра – 162 пепке

Район администрацийĕн ЗАГС пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче районĕпе 162 ача çуралнă. Чи нумаййи – 23 ача – Муркаш ял тăрăхĕн территорийĕнче кун çути курнă. Москакасси ял тăрăхĕнче ку хисеп 17-пе, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче 16-па танлашать.

Çав вăхăтрах январь – май уйăхĕсенче 243 çын пурнăçран уйрăлса кайнă. Иртнĕ çул ку тапхăрта вилекенсем 266 пулнăччĕ. Çатракасси ял тăрăхĕнче вилекенсем 29 çын, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче 28 çын, Муркаш ял тăрăхĕнче 22 çын пулнă.

Пилĕк уйăх хушшинче çĕнĕрен 55 çемье чăмăртаннă. Туйсем ирттерессипе Йӳçкассисем малта. Кунта 10 мăшăр хăйсем çемье çавăрнине официаллă майпа регистрациленĕ. Москакасси ял тăрăхĕн территорийĕнче çемье çавăракансем 8 пулнă. Иртнĕ çул пилĕк уйăхра 60 çемье чăмăртаннăччĕ.

Отчетлă тапхăрта кăçал 18 çемье арканнă.

**Хамăр инф.**

**Июнĕн 22-мĕшĕ – Хурлăхпа астăвăм кунĕ**

# Салтак арăмĕ

***Кăçал çĕр-шыв Аслă Çĕнтерӳ кунне 66-мĕш хут паллă турĕ. Мĕн тери пысăк уяв вăл Аслă Çĕнтерӳ кунĕ! Тăван çĕр-шыва хӳтĕленĕ, тылра вăй-халне шеллемесĕр ĕçленĕ ветерансем умĕнче эпир паян çĕре çити пуç таятпăр. Юнлă вăрçăн пин-пин çапăçу хирĕнче миллионшар салтак ирĕк пурнăçшăн пуçĕсене хунă. Питех те нумаййăн йывăр сурансемпе таврăннă. Вĕсен ячĕсене пирĕн манмалла марах.***

Вăрçă… Çак тискер пулăм 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче кашнин патне, кашни çемьене хуйхă-суйхă илсе çитернĕ. Ăна эпир çулсем иртнĕçемĕн ытларах та ытларах ăнланса илетпĕр. Аслă Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенчех çĕршыва хӳтĕлеме пин-пин арçын çемйисемпе сыв пуллашса фронта тухса кайнă. Хăшĕ-пĕри… яланлăха, ĕмĕрлĕхе.

Çакăн пеккисенчен пĕри – Украина çынни Мефодий Аксентьевич Добровольский. Вăл 1921 çулта Украинăри Трилисы салинче çуралнă. Малашлăх ĕмĕтсемпе пурăнакан çамрăк 1941 çулта тăлăх хĕрпе – Евдокия Тарасовнăпа – çемье çавăрнă. Анчах телейлĕ малашлăха вăрçă ура хурать. Апла пулсан та вĕсен 1942 çулта хĕр çуралать. Галина ят параççĕ ăна. Фронтри çухатусем пĕри тепринчен хăрушăрах. Вăйсем вара татах кирлĕ. 1943 çулта Мефодий Аксентьевичăн та çĕр-шыва хӳтĕлеме ят тухать. Пирĕн мăн асанне Евдокия Тарасовна çулталăкри ачипе пĕччен тăрса юлать. Çав çулхинех вăл упăшки вилни çинчен пĕлтерекен хут илет. Ĕненме йывăр тискер хыпар пулнă вăл çамрăк хĕрарăмшăн. Çамрăк арăм тата пĕчĕк хĕр тĕпренчĕкĕ тăлăха тăрса юлаççĕ... Мĕн чухлĕ пурнăçа хуçман пулĕ çав вăрçă!

Çитменнине Трилисы салине нимĕç фашисчĕсем пырса кĕрсе хуçаланма тытăннă. Чăн-чăн тамăк пулнă вăл вырăнти çынсемшĕн. Пĕтĕм йывăрлăх хĕрарăмсем, карчăк-стариксем тата ачасем çине тиеннĕ. Çав хăрушă çулсене аса илсе

***Евдокия Тарасовна Добровольская.***

Евдокия Тарасовна çапла каласа парать: «Фашистсем ял халăхне ним вырăнне те хумастчĕç. Çавăнпа çынсем урама тухса çӳреме те хăратчĕç. Нумайăшĕ ытларах вăхăта килĕсенче пытанса ларса ирттеретчĕ. Пĕррехинче эпир юнашар Хутора ятлă ял çийĕн (ялĕ пирĕнтен 3 километрта вырнаçнăччĕ) тĕтĕм яваннине куртăмăр: нимĕçсем яла тивертсе янă иккен. Унтан çынсем хытă кăшкăрашни илтĕнме пуçларĕ. Каярахпа вара татах тискертерех хыпар пĕлтĕмĕр. Ирсĕр фашистсем ял çыннисене пурне те – ватти-вĕттине йăлтах – çăла янă, никама та хĕрхенмен. Темиçе кун çăлтан пулăшу ыйтса чуна çӳçентерекен сасăсем пирĕн яла çити илтĕнсе тăчĕç». Каласу шалтан шала кĕрсе пычĕ. Вăрçă хăрушлăхĕ ума туллирех те туллирех тухрĕ.

– Çакăн хыççăн нумай та вăхăт иртмерĕ пирĕн ялта та тăшмансем хуçаланма тытăнчĕç. Ял çыннисен харпăрлăхĕнчи выльăх-чĕрлĕхе тата апатçимĕçе пĕтĕмпех фрицсем туртса илчĕç. Хуйхă-суйхă манăн килтен те иртмерĕ. Пирĕн пўрте те пĕр сăмахсăрах нимĕçсем йышăнчĕç, хама урама хăваласа кăларса ячĕç. Мана вара, пĕчĕк ачаллă хĕрарăма, кўршĕсем хăйсем патне кĕртрĕç. Тепĕр кунне пире Трилисы çыннисене пурне те фашист салтакĕсем хире хăваласа кăларчĕç. Эпĕ те алă çинчи çулталăкри ачапа мĕн пуласса пĕлмесĕр халăхпа пĕрле утрăм. Уйра пире пĕр рете тăратрĕç те хирĕç тăшман салтакĕсем автоматсемпе тăрса тухрĕç. «Пире персе вĕлерме кăларнă вĕт! Нивушлĕ çакă пирĕн пурнăçăн юлашки саманчĕ? – çаврăнчĕ пуçра шухăш. – Эпĕ ачана кăкăр çумне хытăрах пăчăртаса малалла мĕн пулассине кĕтрĕм. Çав вăхăтра пĕр нимĕç офицерĕ патне илемлĕ те яштака пўсиллĕ Эльза ятлă украина хĕрĕ чупса пырса тем калама пуçларĕ. Эльза пирĕн тăрăхсем пулман. Вăл нимĕçсемпе пĕрле килнĕччĕ. Вăл ăçтисем пулнине эпир пĕлмен. Ял халăхĕ вара çав Эльзăна юратмастчĕ, мĕншĕн тесен ăна вĕсем час-часах нимĕç офицерĕсем хушшинче курнă. Пурте вăл тăшмансене пулăшать тесе шутланă. Эпир ăнланнă тăрăх çавăн чух Эльза айăпсăр çынсене ирĕке яма ыйтнă. Кăшт тăхтасан офицер нимĕç салтакĕсене аллипе сулса тем каларĕ те пире салатса ячĕç. Эпир çав тери савăнтăмăр.

Вăхăт иртсен çеç эпир Эльза партизансене пулăшнине пĕлтĕмĕр. Вăл фашистсен пĕр офицерне çывăх вăрманти Черный Яр ятлă вырăна улталаса илсе кайса партизансен аллине тыттарнă. Кунсăр пуçне Эльза партизансене апатçимĕçпе те сахал мар тивĕçтернĕ. Анчах та кун çинчен нимĕçсем нимĕн те пĕлмен. Эпĕ халĕ те çав украина хĕрне, Эльзăна, пире вилĕмрен çăлнăшăн ырăпа çеç аса илетĕп. Вăрçă хыççăн Эльза пирки вăл нимĕçсем майлă пулман-и тесе ял халăхĕнчен нумай ыйтса тĕпчерĕç. Анчах та Эльзăн ячĕ вараланмарĕ. Вăл пулман пулсан пирĕн ял халăхĕ те пĕтĕмпех пĕтетчĕ. Çав шутра эпĕ те хамăн пепкемпе», - куççульне шăлса аса илчĕ пирĕн ватă асанне.

Халĕ Евдокия Тарасовна Добровольская Тренккă ялĕнче пурăнать. Вăл 92 çулта. 1996 çулта салтак арăмĕ Украинăран Чăваш Республикине пĕртен-пĕр хĕрĕ патне куçса килчĕ, пирĕн енре ватлăх канăçне тупрĕ. Унăн паян тăватă мăнук тата мăнукĕсен ачисем вунпĕррĕн.

Вăл эпир пуррипе савăнать. Кашни çул пĕрле пухăнса ăна Çĕнтерӳ кунĕпе ăшшăн саламлатпăр. Унпа пĕрлех пур ветерансене те, тыл ĕçченĕсене те, вăрçă вăхăтĕнчи ачасене те çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эсир çавна тивĕç!

**А. ХРАМОВА,**
**Ильинка ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн председателĕ.**

# Шывра инкексем ан пулччăр

Врач сёнет

***Шыв хёрринче канасси çынсен йăлине çирёпрех те çирёпрех кёрсе пырать. Шыв вара илемлипе пёрлех хăрушлăх кăларса тăратма та пултарать. Çакăн пирки паян Муркашри тёп больницăри васкавлă пулăшу уйрăмён ертӳçи Н.А. АРТЕМЬЕВА врач аса илтерет:***

– Шыв хёрринче канасси инкеклё ан пултăр тесен шыва кёме юраман вырăнта шыва ан кёрёр. Шыва кёме суйланă вырăнта çырансем чăнкă ан пулччăр, шыв тёпё урана ыраттарма пултаракан йывăç тымарёсемсёр пултăр. Пёлмен вырăнта шыва сикни тёрёс мар. Тепёр чух çак вилём патнех илсе çитерме пултарать. Шыв тёпёнче темён те пулма пултарать-çке-ха: чул та, тимёр-тăмăр та...

Хёвел çинче нумай вăхăт пулнă хыççăн, эрех ёçнё хыççăн та шыва кёмелле мар.

Çырантан вăраххăн тарăнланса пыракан вырăнсенче шыва асăрханса утса кёмелле. Ытла инçе ишсе кайма ан тăрăшăр, мёншён тесен каялла килме вăй çитмесен те пултарать.

Шыв юххи тёлне лекрёр пулсан ăна хирёç ишмелле мар, ăна майлă майёпен çыран еннелле пăрăнса пымалла. Шыв çаврăнăшёнчен ăста ишекенсем те аран-аран ишсе тухнине шута илсе шыв çаврăнăшё патне пымалла мар.

Шывра кашнинех хăйне йёркеллё тытмалла. Выляма пуçласан хăвăрăн юлташусене куçран вёçертмелле мар. Пёр-пёрне шывра вылямалла путармалла мар, шӳтлесе «путатăп, пулăшăр!» тесе кăшкăрма юрамасть.

Шывра 10-15 минутран ытла, шăлсем пёр-пёрин çумне перёнми пуличчен ан тăрăр. Шăнăрсем туртса лартсан шывран тӳрех тухмалла, пулăшу ыйтмалла.

Православи уявёсем

# Троица

***Троица уявё – Святой Сывлăш апостолсем çине аннă кун – çитес вырсарни кун килет. Çак пысăк уяв пирки, ун умёнхи Ваттисене асăнмалли кун çинчен тата ун хыççăнхи Святой Сывлăш кунё пирки паян пире Муркашри Владимир Турă Амăшён Турăшён чиркёвён настоятелё Федор атте каласа парать:***

– Троица пирки сăмах пуçариччен малтан Иисус Христос Турă Пёлёт çине çёкленни пирки те каласа хăвармалла. Çав кун Вăл апостолсене Иерусалима кайăр та пӳртрен тухмасăр кёл тăвăр, эпё сирён çине Святой Сывлăш ярăп, тенё.

Кун пирки Çёнё Заветра ак мёнле çырса панă:

«Аллăмёш кунхи праçник кунё, ирхине, вёсем пурте пёрле пёр шухăшпа тăнă. Вăйлă çил кёрлесе килнё пек, пёлёт çинчен сасă сасартăк илтённё те вёсем тăракан пётём пӳрте пырса тулнă. Вёсене вут чёлхесем пек чёлхесем уйрăммăн тăрса курăннă та, харпăрăшё çине пёрер чёлхе чарăнса тăнă. Вара Вёсем пурте Святой Сывлăшпа хăватланнă та, хăйсене Сывлăш каласа кăтартма хушнă пек, урăх чёлхесемпе калаçа пуçланă. Турра ёненсе тёнчери пур халăх хушшинче пурăнакан иудей çыннисем ун чухне Иерусалимра пулнă. Çак кёрленё сасă илтёнсен, халăх пухăннă та аптăра юлнă: вёсем пурте Апостолсем хăйсен чёлхипе калаçнине илтнё. Пурте, пёр-пёринпе калаçса, ăсран кайса тёлёнсе тăнă: çак калаçакансем пурте Галилея çыннисем мар-и вара? Епле тата эпир пурсăмăр та вёсем пирён чёлхепе калаçнине илтетпёр? ... вёсем Турăн пысăк ёçёсем çинчен пирён чёлхепе калаçнине илтетпёр, тенё. Пурте ăсран кайса тăнă, ăнланаймасăр, пёр-пёрне каланă: мён пулать-ши ку? тенё. Хăшё тата мăшкăлласа каланă: вёсем тутлă эрех ёçсе ӳсёрёлнё, тенё».

Тепёр майлă каласан апостолсем хăйсем çине аннă Святой Сывлăшпа хăватланнă. Турăн ёçёсем çинчен кашни халăха хăйсен чёлхипе каласа панă. Пур халăх та вёсем патне туртăннă. Çак никёс çинче Христиансен Чиркёвё йёркеленнё те ёнтё.

Çак куна асра тытса, хисеплесе кашни чиркӳрех Троица кунёнче кёлёсем иртеççё. Кёл туса эпир те апостолсен тёслёхёпе Турăран пирён çине те Святой Сывлăш антарма йăлăнатпăр, пирён пурнăçа майлаштарса ятăр тесе ыйтатпăр.

Троица уявёнче тёне çирёп тытакан йăла пур. Храмсене, чиркӳсене йывăç тураттисемпе илемлетеççё. Ку вăл малтанхи вăхăтранах пырать. Туратсем, курăксем чиркӳре тасалаççё. Çав туратсене уяв хыççăн ёненекенсене валеççе параççё. Курăк-туратсемпе ёненсе усă курсан вёсен сиплёхне туйма пулать. Кил таврашёнче те чиркӳре тасатнă курăк-туратсем тирсе хураççё: хапха çине, алăк умне.

**ВАТТИСЕН ПРАÇНИКЁ**

Святой Сывлăш аннин уявё Иисус Христос Турăн этеме каялла çăтмаха тавăрмалли ёçне вёçлекен утăм шутланать. Маларах эпир каларăмăр ёнтё, Троица уявёнче апостолсем çине Святой Сывлăш аннă евёр пирён çине те Святой Сывлăш антăр тесе кёл тăватпăр тесе. Анчах та хальхи вăхăтра пурăнакансен çеç мар, пиртен маларах пурăннисен те çакăнта хутшăнмалла. Çавăнпа та эпир вёсем çине те Святой Сывлăш антăр тесе вёсене пурне те Ваттисен праçникёнче асăнатпăр. Вилнисем те çак Святой Сывлăш аннă тăрăх Турăн ырлăхне илччёр тесе асăнатпăр.

Ваттисен праçникё чухне те чиркӳсенче кёлё пулать. Çавăнпа та маларах каланине шута илсе чиркёве кайса вилнисене пурне те асăнтармалла, просфор кастармалла. Чиркӳре мён чуль нумайрах халăх кёл тăвать, çавăн чухлё лайăхрах. Çак кёлё питё вăйлă. Мёншён тесен пурте пёр кёлёпе тăратпăр. Кашни çын кёл туни Турă патне пёр кёлё пек каять.

Кёлёне килнё чух пăтă е ытти çимёç илсе килсе тасатмалла. Кайран килте сётел çине лартмалла.

Чиркӳре ваттисене асăнтартăмăр, çимёçе тасатрăмăр, кёлё вёçленчё. Хыççăн таса йёрке тăрăх масар çине кайса вилнё тăван-хурăнташсене вёсен вил тăприсем çинче кёске кёлёпе (лития) асăнмалла. Ку ёçе тума пачăшкăсене чёнсен те аван, анчах та кашни çыннăн çак кёлёне туса ирттерме йёрки пур.

Мёнле йăнăшсем тăватпăр-ха çак праçникра?

Килте те, масар çинче те эрех ёçме юрамасть. Эрех – чуна савăнтарать, çавăнпа та вилнё çынна эрехпе асăнни – вёсене хисепе хуманни, кӳрентерни. Пирён чăн-чăн йёрке (устав) тăрăх масар çине те ёçмелли-çимелли илсе каймалла мар. Апат-çимёçпе килте асăнни çителёклё. Масар çинче вара кёлё вуласа асăнмалла, вил тăприсене юсаса хăвармалла, чечек лартса илемлетмелле...

Вилнисем валли тесе уйрăм чашăктирёк те лартмалла мар. «Пирёнпе килсе лар, çи» тени те вырăнлă мар. Чун вăл – сывлăш, çавăнпах вăл килсе апат (материаллă япала) çиеймест. Чуна çакна чăтма та йывăр. Вилнё çыншăн çакă мăшкăл пек пулать. Вăл çиейменнине пёлсех çиме кил темелле мар.

Чун апачё вăл – уншăн кёл туни, вилнисен ячёпе ырă ёçсем туни пулать. Вăл çавăнпа тăранать те. Çапла вара Ваттисен праçникёнче чиркӳре кёл тумалла, масар çинче, кайран килте – сётел хушшине ларас умён. Çапла чухне çеç эсир вилнисене асăнатăр. Сётел хушшине ахаль кёрсе ларни вăл асăнни мар.

**СВЯТОЙ СЫВЛĂШ КУНЁ**

Пирён Турă виçё ипостаслă: Атте Турă, Ывăл Турă, Святой Сывлăш Турă. Святой Сывлăш Турăна хисеплесе ятарласа кун пур: Троица хыççăнхи кун.

«Çёр çинче ёçлеме юрамасть, çёр праçникё» теççё çав куна халăхра. Юрамасть тени вăл çав вăхăтра кёлёре пулмалла тенине пёлтерет.

Святой Сывлăш кунё – пысăк уяв. Турă пире Святой Сывлăш урлă ырлăх парать. Пётём япала Святой Сывлăш аннипе тасалать. Эпир хамăр пурнăçра та кёл туса тасатнă япаласемпе усă куратпăр (сăмахран, машина, хваттер, чиркӳрен тасатса илсе килнё шыв...). Апла пирён Святой Сывлăша хисеплеме тăрăшмалла. Ана тав тăвасси – кёл тунинче. Турăн пёр ипостасне ятарласа асăнмалли кун çулталăкра пёрре кăна. Çавăнпа та Ана кёл туса тав тума манмалла мар.

ГИБДД пёлтерет

# Водитель удостоверенийё: çёнёлле

Раççей Федерацийён Шалти ёçсен министерствин 2011 çулхи апрелён 18-мёшёнчи 206 № хушăвёпе водитель удостоверенийён çёнё тёслёхё вăя кёчё.

Мёнлерех-ха вăл? Пётём тёнчипех водитель удостоверенийё А6 форматлă (148 х105 мм) кёнеке евёр, сăрă тёслё хуплашкаллă, виçё листаран тăрать. Шалти тăватă шурă листине çиппе çёлесе хунă.

Удостоверение хутран хатёрленё, удостоверени бланкё вара суя документ тăвассинчен хӳтёленё полиграфин «В» шайёнчи продукци шутланать. Удостоверенин шалти страницисенчи информаци хуплашкан иккёмёш страницинчи содержанипе пёр килет: французла çырнине вырăс, акăлчан, испани, нимёç, итали, араб, яппун тата китай чёлхисем çине куçарни.

Удостоверени панă чухне унта пичетлемелли хатёрпе е тата ятарлă хура чернилпа е хура тёслё пастăпа çыраççё. Удостоверение мён те пулин çырса хумалла чух унта латин алфавитёнчи сас паллисемпе тата араб цифрисемпе усă кураççё.

Ятарлă вырăна ялтăртатман хут çине кăларнă хура-шурă е тёслё 35х45 мм калăпăшлă сăн ӳкерчёк çыпăçтараççё. Сăн ӳкерчёк айне ятарлă чернилăпа е хура тёслё пастăпа алă пусмалла.

Удостоверенире çырнисене тата унти сăн ӳкерчёке Патшалăх автоинспекцин çаврака пичечёпе çирёплетеççё.

**С. ИВАНОВ,**
**районти шалти ёçсен пайён çул-йёр хăрушсăрлăх инспекцийён ертӳçин тивёçне вăхăтлăх пурнăçлаканё.**

**Продаем доски: обрезные, необрезные, брус любого сечения, срубы из оцилиндрованного бревна. Доставка бесплатно. Тел.: 8-919-679-18-11, 8-927-859-91-55. 5-5.**

**Ремонт скутеров. Шиномонтаж на станции юных техников работает без выходных с 8-00 до 20-00 час. Ремонт стиральных машин-автоматов с выездом на дом. Парикмахерская «Шарм» оказывает все виды услуг, любая стрижка 100 руб., детская 50 руб. Принимаю заказы на обслуживание свадеб на ретро-автомобиле «Кабриолет». Тел.: 8-953-010-21-34, 8-962-599-04-70.**

* * *

**Продаю роторную навесную косилку КРН-2,1. Цена договорная. Тел.: 8-927-846-66-04.**

**Куплю пух-перо, новые и старые, подушки или обмен на новые матрасы, одеяла, подушки и постельные покрывала с выездом на дом.**
**Тел.: 8-927-443-78-42, 8-903-379-10-32.**

**Кредитный потребительский кооператив «СОДРУЖЕСТВО»:**

**ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ ПАЙЩИКАМ**
**на любые неотложные цели, а также на покупку и строительство жилья с использованием средств материнского капитала. Низкие процентные ставки, доступно и оперативно;**

**ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ ПАЙЩИКОВ**
**на привлекательных условиях. Действуют льготные ставки для пенсионеров, инвалидов.**

**Наш адрес: с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23 (здание ОАО «Моргаушскавтотехсервис», 2 этаж), тел.8-919-673-42-19. 3-6.**
www.kpksodrugestvo.ru

Пёлтерӳсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

* * *

**Бурение на воду. Тел.: 8-927-993-53-60.**

* * *

**Пăрусем, вăкăрсем, сурăхсем, такасем туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.**

* * *

**Продаю: колеса на МТЗ-82, МТЗ-892, МТЗ-1221, новые. Передний мост на МТЗ-82.**
**Тел.: 8-906-135-83-81, 8-937-398-01-81.**

* * *

**Продаем: блоки керамзитобетонные, пенобетонные, тротуарную плитку, сетку-рабицу. Качественно, недорого. От производителя ООО «Промсварка».**
**Тел.: (8352)36-01-03, 36-01-06. 4-4.**

* * *

**Все виды сантехнических услуг: демонтаж и монтаж систем отопления и водоснабжения из полипропиленовых и металлопластиковых труб. Установка сантехприборов, душевых кабин, моек, раковин, стиральных машин, водосчетчиков. Тел.: 8-953-012-67-02.**

* * *

**Продается ПШЕНИЦА, ЯЧМЕНЬ. Цена договорная. Тел.: 8-919-664-68-76.**

* * *

**Срочно продаю деревянный дом разм. 6мх6м. Самовывоз. Цена договорная. Тел.: 8-961-343-21-92.**

* * *

**ОАО «Моргаушавтотехсервис» требуются: повар и подсобный работник столовой, водитель служебной легковой автомашины и КамАЗа.**
**Обращаться по тел.: 62-7-90, 62-1-43. 2-2.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), асфальт. Возможна доставка.**
**Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 2-8.**

* * *

**Аттестат, выданный Юнгинской СОШ Тепеевой Елене Григорьевне в 1996 году, считать недействительным.**

* * *

**В кафе «Автомиг» (ООО «Заря») требуется официантка. Тел.: 8-903-066-20-73.**

* * *

**Продается земельный участок 10 соток недалеко от р. Волга, однокомнатная квартира в с. Б. Сундырь. Цена договорная. Тел.: 8-952-021-63-95, 8-927-999-74-54.**

* * *

**7 июня открылся магазин «Автозапчасти» по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 (территория «Агропромснаба»). Большой ассортимент товаров на автомобили: ВАЗ, ГАЗ, УАЗ, иномарки. Тел.: 8-927-859-45-93. 1-2.**

* * *

**Продаем деревянный дом с земельным участком 0,40 га в д. Хундыкасы Ильинского сельского поселения. Тел.: 8-950-357-35-88.**

***

**В объявлении собственников земельных долей о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в районной газете «Çёнтерӳ ялавё» от 21 мая 2011 года в № 38 (7892) стр. 4, в последней колонке, в 15 абзаце допущена опечатка. Вместо «Большие Шептаки» следует читать «Большие Токшики».**

***

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:030601:65, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:030601, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 16650 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

***

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:110101:156, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

***

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:281001:142, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:281001, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают искреннее соболезнование ветерану Большесундырского райпо Васильевой Л.Ф. по поводу безвременной кончины мужа

**ВАСИЛЬЕВА**
**Аверкия Алексеевича.**

Тойкилтёри пётёмёшле пёлӳ паракан тёп шкул коллективё кунта биологипе хими предмечёсене вёрентекен С.М. Степановăн амăшё

**Евдокия Ивановна**
**ПАРГЕЕВА**

вилсе кайнă пирки унпа пёрле тата унăн тăванёсемпе тарăннăн хурланса пёлтерет.

Муркаш райпо коллективё «Радуга» кафере повар пулса ёçлекен Е.В. Систейкинăн

**АШШЁ**

вилсе кайнă пирки унăн тăванёсемпе тата çывăх çыннисемпе пёрле пётём чун-чёререн хурланнине пёлтерет.

**Муркаш районёнчи «Çёнтерӳ ялавё» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерствин «Муркаш районён «Çёнтерӳ ялавё» хаçат редакцийё» автономи учрежденийё.**

**Тёп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялё, Мир урамё, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тёп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайё - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайё - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ёçлекен управленийё 2009 çулхи раштавăн 7-мёшёнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрацилене.**

**Калăпăшё 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвёсене рецензилемеççё, каялла тавăрса памаççё, 2 страницăран пысăк-раххисене йышăнмаççё.**
**Рекламăпа пёлтерӳсен чăнлăхёшён вёсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСЁ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйё Шапошников В.Л.**
**Пичете панă 07.06.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4337.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çёнтерӳ ялавё», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.